Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи майӑн 5-мӗшӗнчепе тухать

101 (7526) № * Юн кун, 2007 ҫулхи ноябрӗн (чӳк) 28-мӗшӗ * Хакӗ ирӗклӗ

Суту-илӳ сферинче

## Ялти культурӑшӑн тӑрӑшаҫҫӗ



Раҫҫейре юлашки ҫулсенче производствӑна, сывлӑх сыхлавне, ачасене вӗрентессине аталантарасси ҫине наци проекчӗсем урлӑ пӑхма пуҫларӗҫ. Ыранхи кун пирки шутлакансем валли пысӑк пулӑшу пур кунта. "Производствӑна ӳстерниле пӗрлех халӑхпа ӗҫлес культура пирки манас марччӗ. Кӗсье тулли укҫаллӑ, анчах культурӑсӑр ҫын ҫине камӑн пӑхас килтӗр?" – тенӗччӗ пӗррехинче Муркаш райпо Канашӗн ертӳҫи Б. Андреев. Борис Васильевич каланӑ сӑмаха ҫилпе вӗҫтерменни юлашки ҫулсенче курӑнсах пырать. Акӑ кӑҫалхи ҫу вӗҫӗнче Лантӑшри куллен кирлӗ таварсен магазинӗ капиталлӑ юсав хыҫҫӑн тавар туянакансене илемлӗ ҫуртра йышӑнма пуҫларӗ.

– Ял ҫыннисемшӗн ҫакӑн пек тӑрӑшнӑшӑн хамӑр ертӳҫӗне тав сӑмахӗ кӑна каламалла. Лантӑшра пурӑнакансем ҫапла тӑваҫҫӗ те. Евромагазина кӗме те, кунта тавар сутма-туянма та кӑмӑллӑ, – терӗ кашни килекене ӑшӑ кӑмӑлпа кӗтсе илекен Светлана Ильинична Колбасова **(сӑн ӳкерчӗкре)**. Вӑтам шкул пӗтернӗ хыҫҫӑн райпо ҫумӗнчи шкулмагазинра сутуҫӑна вӗреннӗ хыҫҫӑн райпо системинче 21 ҫул вӑй хуракан Светлана паян Лантӑш магазинӗн заведующийӗ. 2004 ҫулта "Потребкооперацири ырӑ кӑмӑллӑ ӗҫшӗн" кӑкӑр ҫине ҫакмалли паллӑна илнӗскер, пӗрле ӗҫлекен Ольга Емельяновапа тавар сутас культурӑна ӳстерессипе малалла ӗҫлет. Культура пысӑк ҫӗртен вара халӑх та татӑлмасть, тавар ҫаврӑнӑшӗ те палӑрмаллах ӳсет.

**Анатолий БЕЛОВ**
**сӑн ӳкерчӗкӗ.**

Республикӑра

## Чӑваш Ен удобренисем халех хатӗрлет

Ноябрӗн 26-мӗшӗнче Чӑваш Республикин Президенчӗ Николай Федоров республика правительствин членӗсемпе тата федераци ведомствисен территори органӗсен ертӳҫисемпе канашлу ирттернӗ.

Ял хуҫалӑх министрӗ Михаил Игнатьев пӗлтернӗ тӑрӑх, республикӑн агропромышленноҫ комплексӗнче ҫитес ҫулхи ҫурхи ӗҫсене хатӗрленме пуҫланӑ. Республикӑн апат-ҫимӗҫ фончӗ урлӑ халех ӗнтӗ минерал удобренийӗсем туянаҫҫӗ, ҫак кунсенче вӗсен пысӑк партийӗ Чӑваш Ене ҫитнӗ. Министр палӑртнӑ тӑрӑх, ҫакнашкал ӗҫ ял хуҫалӑхӗнче тавар туса илекенсенче шанӑҫ ҫуратать, укҫа-тенкӗ нумай перекетлеме май парать.

Хула тӑвас ӗҫ тата общество инфратытӑмӗн аталанӑвӗн министрӗ Александр Гончаров Раҫҫейри Регионсен аталанӑвӗн министерствине Чӑваш Республикинчи ялсемпе хуласенчи пурӑнмалли ҫуртсене, инженери сечӗсене юсама, модернизацилеме укҫа-тенкӗ пирки пӗрлехи заявка янине пӗлтернӗ. Ӑна 2008 ҫулта федерацин пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑх объекчӗсене ҫӗнетме тата модернизацилеме пулӑшакан фондӗнчен уйӑрӗҫ.

Н.В. Федоров эпир хамӑрӑн укҫа-тенкӗ нумай ӗҫ тунине палӑртнӑ, анчах та ресурссем ытларах кирлӗ. Ҫавна май пирӗн тӗллев – хамӑра мӗн кирли пирки тӗрӗс шухӑшсемпе ӑнлантарасси, федераци тытӑмӗсемпе пӗлсе ӗҫлесси.

Президент Администрацийӗн Ертӳҫи Энвер Аблякимов территорисен хӑй тытӑмлӑхӗ – граждансем юсавсем, ҫулсене, территорисене тирпейлени пирки хӑйсен шухӑшне пӗлтерни – уйӑракан укҫа-тенкӗпе эффективлӑ усӑ курма пулӑшасса каланӑ. "Общество хӑй тытӑмлӑхӗ – лару-тӑрӑва витӗр курса тӑракан лайӑх тӗрӗслевҫӗ. Халӑх унӑн пӗлтерӗшне ӑнланни кирлӗ", – палӑртнӑ Николай Федоров, йӗркеленӗ тытӑмсене тивӗҫлипе пулӑшма хушнӑ.

**ЧР ПА пресс-служби.**

Суйлавҫӑсене пӗлме

## Паспорт ҫуккисен вӑхӑтлӑх удостоверени илмелле

Ҫитес вырсарни кун – РФ Патшалӑх Думин депутачӗсен суйлавӗ. Суйлава пурин те паспортпа каймалла. Камӑн паспорт ҫук, вӗсене вӑхӑтлӑх удостоверени кирлӗ пулать. Ку документа тума пирӗн пата килмелле. Ӑна валли сӑн ӳкерчӗк кирлӗ пулать. Миграци службин Чӑваш Республикинчи федераци управленийӗн пирӗн районти территори пункчӗ кашни кунах 8 сехетрен пуҫласа 20 сехетчен ӗҫлет. Асилтеретӗп, ҫитес шӑмат кун та, вырсарни кун та мӗн суйлав вӗҫлениччченех ӗҫлетпӗр. Ҫавӑнпа та паспорт ҫук граждансене вӑхӑтлӑх удостоверени тума хапӑл туса кӗтетпӗр.

**З. СОРОКИНА,**
**Миграци службин Чӑваш Республикинчи федераци управленийӗн Муркаш районӗнчи территори пункчӗн ертӳҫи.**

Сӑмах – район администрацийӗн ӗҫченне

## Шкулсем кус умӗнчех пуянланчӗҫ

***Приоритетлӑ наци проекчӗсем пирӗн пурнӑҫа мӗн тери ырӑ улшӑнусем илсе кӗнине пирӗнтен кашниех лайӑх пӗлет. "Вӗрентӳ" наци проекчӗ кӑҫалхи 10 уйӑхра пирӗн районта мӗнле пурнӑҫланни ҫинчен каласа парать те район администрацийӗн вӗрентӳ, ҫамрӑксен политики тата физкультурӑпа спорт пайӗн пуҫлӑхӗ Л.И. МОЧАЛОВ:***

– Асӑннӑ наци проекчӗ ҫӗнӗ программӑсене пурнӑҫа кӗртекен вӗрентӳ учрежденийӗсене, ҫӗнӗлле ӗҫлекен учительсене татах та хавхаланса ӗҫлеме ҫулсем уҫса пачӗ. Ҫакна валли чи тӑрӑшуллӑ учительсене валли район администрацийӗн пуҫлӑхӗн 5-шер пин тенкӗллӗ 20 грантне, шкулсене валли 20-шер пин тенкӗллӗ 5 грантне туса хунӑ.

Тӳрех ҫакна палӑртса хӑвармалла. РФ Президенчӗн, Чӑваш Республикин Президенчӗн тата район администрацийӗн пуҫлӑхӗн гранчӗсене камсем тивӗҫнине палӑртас тӗллевпе районти пур вӗрентӳ учрежденийӗнче те обществӑлла экспертиза кунӗсене туса хунӑ. Ҫавӑн пекех наци проекчӗ мӗнле пурнӑҫланни тата шкул мӗнле аталанса пыни ҫинчен шкулсенче ятарлӑ стенд хатӗрленӗ.

Ҫамрӑк специалистсем валли уҫӑ уроксем ирттерни те вӗсене опытлӑ учительсенчен нумай вӗренме май пачӗ.

Кӑҫал республикӑри конкурс комиссийӗн йышӑнӑвӗпе Москакассипе Нискасси шкулӗсем РФ Президенчӗн грантне – 1 миллион тенке тивӗҫрӗҫ, Муркаш шкулӗ – Чӑваш Республикин Президенчӗн грантне – 200 пин тенке. Асӑннӑ суммӑсемпе ҫӗнтерӳҫӗ-шкулсем хӑйсен пурлӑхпа техника базине ҫирӗплетнӗ, тӗрлӗ оборудовани туяннӑ ҫӗрте усӑ курчӗҫ, методика тӗлӗшӗнчен пуянланчӗҫ.

Уйрӑм учительсенчен Йӳҫкасси шкулӗнчи историпе обществознание вӗрентекен В.И. Тихонов РФ Президенчӗн грантне – 100 пин тенкӗне, "Солнышко" ача сачӗн воспитателӗ О.В. Прокопьева Чӑваш Республикин Президенчӗн грантне – 10 пин тенкӗне тивӗҫрӗҫ.

**– Кӑҫал район администрацийӗн пуҫлӑхӗн стипендийӗн виҫи те ӳсрӗ вӗт?**

– Асӑннӑ стипендие талантлӑ ҫамрӑксемпе вӗренекенсене хавхалантарма ҫирӗплетнӗ. Кӑҫал вӑл 200 тенкӗпе танлашать. Ӑна кашни чӗрӗк вӗҫленнӗ хыҫҫӑн параҫҫӗ. Районӑн обществӑлла пурнӑҫӗнче хастар ҫамрӑксене район администрацийӗн Хисеп грамотисемпе, Тав ҫырӑвӗсемпе чысласҫҫӗ. Хастар та пултаруллӑ ҫамрӑксене хавхалантарма пурӗ 57100 тенкӗ уйӑрнӑ.

**– Леонид Иванович, наци проекчӗ воспитани ӗҫӗн пӗлтерӗшне те ӳстерчӗ.**

– 2006 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа класс ертӳҫисене укҫа хушса тӳлеме пуҫларӗҫ. 2006-2007 ҫулхи вӗренӳ ҫулӗнче класс ертӳҫисем 314 пулчӗҫ. Укҫа федераци шайӗнчен ҫакна валли вӑхӑтра килсе тӑрать. Федераци бюджетӗнчен субсиди шучӗпе тӳленӗ пӗтӗм сумма кӑҫал 3094,8 пин тенкӗпе танлашать. Класс ертӳҫисене хушса тӳлеме муниципаллӑ йӗркелӳ бюджетӗнчен 407,1 пин тенкӗ тӳленӗ ку таранччен.

2006-2007 ҫулхи вӗренӳ ҫулӗнче ирттернӗ класс ертӳҫисен конкурсне 32-ӗн хутшӑннӑ пулсан, чи лайӑх ертӳҫӗсене 9 ҫынна суйласа илнӗ. Калайкасси шкулӗнчи Т.А. Ершова вара республика шайӗнчи конкурсра "Личноҫа социализацилесси" номинаци ҫӗнтерӳҫи пулса тӑчӗ.

**– Паян районти шкулсенче Интернета та тухма пулать. Наци проекчӗн ҫак енӗ ҫинчен мӗн калана пулаттӑр?**

– Кашни шкултах паян Интернет ҫыхӑнӑвӗ ӗҫлет. Пӗтӗмпе вӗрентӳ учрежденийӗсенче 314 компьютер. Ҫапла вара кашни 16 вӗренекене 1 компьютер тивӗҫет.

Шкулсенче паян Интернет сечӗн ресурсӗсемпе анлӑ усӑ кураҫҫӗ. Дистанциллӗ олимпиадӑсене, "Инфознайка" вӑйӑ-конкурса, Интернет-педсоветсене тата ытти ҫӗре те хутшӑнаҫҫӗ. Муркаш тата Мӑн Сӗнтӗр шкулӗсенче Интернет ресурсӗсемпе усӑ курса семинар занятийӗсемпе мастер-классем ирттереҫҫӗ.

Кӑҫалхи апрелӗн 10-мӗшӗнче Йӳҫкасси шкулӗнче районти шкулсем хушшинчи методика центрӗ уҫӑлчӗ. Унта учительсен информаципе коммуникаци технологи тӗлӗшӗнчен вӗренессипе икӗ программӑпа вӗренӳ курсӗсем ирттеҫҫӗ. Пӗтӗмпе ҫакна валли 28 пин тенкӗ укҫа уйӑрнӑ.

Ҫакна та каласа хӑвармалла. Шкулсене Интернетпа ҫыхӑнтармалли программӑпа муниципаллӑ бюджетран Муркаш шкулӗ валли 7 компьютер, пуҫламӑш шкулсем валли тепӗр 5 компьютерпа 5 лазерлӑ принтер илнӑ. Пӗтӗмпе 247 пин тенкӗлӗх.

**– "Вӗрентӳ" наци проекчӗ пурнӑҫа кӗме пуҫланӑранпа шкулсем вӗрентӳ пособийӗсемпе те пуянланчӗҫ пулӗ-ха?**

Шкулсене компьютерсемпе тивӗҫтернӗ
(пӗр компьютер миҫе шкул ачине тивет)




– Вӗрентӳ пособийӗсемсӗр пуҫне тата тӗрлӗ оборудовани, шкул автобусӗсем килсе ҫитрӗҫ. Вӗрентӳ учрежденийӗсене физика, географи, биологи, хими пӳлӗмӗсем, интерактивлӑ аппаратпа программа комплексӗ пурӗ 1623927 тенкӗлӗх килчӗ. Ҫавӑн пекех пуҫламӑш классем 559300 тенкӗлӗх сӗтел-пуканпа, шкул библиотекисем 1024599,64 тенкӗлӗх литературӑпа пуянланчӗҫ.

Наци проекчӗпе килӗшӳллӗн кӑҫал района 3 шкул автобусӗ килчӗ. Ҫатракасси, Ярапайкасси, Оринин шкулӗсене патӑмӑр вӗсене. Кунсӑр пуҫне тата 1 пӗчӗк автобус килчӗ. Чуманкасси шкулӗнче вӑл.

Сӑмаха пӗтӗмлетсе вара ҫакна палӑртас килет. "Вӗрентӳ" наци проекчӗ пурнӑҫа кӗме пуҫланӑранпа учительсем татах та тӑрӑшуллӑрах ӗҫлеме пуҫларӗҫ. Вӗсем ача тарӑн пӗлӳ илтӗр тесе хӑйсенчен киллнине йӑлт тӑваҫҫӗ. Вӗрентӳ учрежденийӗсен аталанӑвне сӳтсе явнӑ ҫӗре общественноҫа активлӑ явӑҫтарма пуҫларӑмӑр. Шкулсен пурлӑхпа техника базине пуянлатма майсем уҫӑлчӗҫ. Ҫавӑнпа та малалла та ҫак ҫулпах каясчӗ. Ҫавӑн чухне ҫеҫ пирӗн шкулсем малалла аталанӗҫ, ачасем тарӑн та ҫирӗп пӗлӳ илӗҫ.

**– Тавах, Леонид Иванович, калаҫушӑн.**

**Л. ПАВЛОВА**
**калаҫнӑ.**

Суйлавччен 4 кун юлчӗ

## Ҫӗршыв малашлӑхӗшӗн сасӑлар

Юлашки ҫулсенче халӑх пурнӑҫӗ лайӑх енне улшӑнни никамшӑн та вӑрттӑнлӑх мар. Раҫҫей экономики, тӗпрен илсен, самай ҫӳлелле ҫӗкленчӗ. Ҫавна май пурнӑҫӑн ытти сферинчи ӗҫсем те ырӑ еннелле улшӑнчӗҫ. Ҫакна эпӗ тӗппипех В.В. Путин ҫӗршыва ертсе пынипе ҫыхӑнтаратӑп. Ҫавӑнпа В.В. Путин планне эпӗ ырлатӑп. Ҫак планра халӑхӑн малашнехи тӑнӑҫ пурнӑҫне куратӑп.

В.В. Путин витӗм кӳнипе ҫӗршывра приоритетлӑ программӑсем ӗҫлеме пуҫларӗҫ. Эпӗ хам вӗрентӳ сферинче ӗҫленӗрен тата яллӑ вырӑнта пурӑннӑран ҫак наци проекчӗсем халӑха пысӑк пулӑшу кӳнине туятӑп.

Ҫӗршывра пулса иртекен лайӑх пулӑмсене сыхласа хӑварасси – пирӗн тӗп тӗллев. Апла пулсан ҫывхарса килекен суйлавра пирӗн тӗрӗс сасӑламалла. Эпӗ хам Ҫатракасси вӑтам шкулӗнче чылай ӗҫлетӗп. Хальхи вӑхӑтра ҫак шкул коллективне ертсе пыратӑп. Эпир В.В. Путин курсне ырлатпӑр. Ҫавӑнпа та пирӗн шкулта ӗҫлекенсем декабрӗн 2-мӗшӗнче суйлава пурте хутшӑнӗҫ. Пӗр ҫын пек пулса ҫӗршыв малашлӑхӗшӗн сасӑлӗҫ.

**В. ПРОКОПЬЕВ,**
**Ҫатракасси шкул директорӗ.**

Налук инспекцийӗнче

## Килӗшӗве пӑхӑнса ӗҫлемелле

Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗн, ЧР профсоюзсен пӗрлешӗвӗсен тата ЧР ӗҫ паракан пӗрлешӳсен представителӗсем ӗҫ укҫин чи пӗчӗк шайӗ пирки килӗшӳ тунӑччӗ. Ҫавна май унӑн шайӗ сентябрӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа 3295 тенкӗпе танлашрӗ. Ҫак йӗркене вара федераллӑ бюджетран укҫа-тенкӗ илсе тӑракансем кӗмеҫҫӗ.

Ӗҫ укҫине чи пӗчӗк виҫерен кая мар тӳлессине Чӑваш Республика бюджечӗ тытса тӑракан организацисем, предприниматель тата ытти ҫавӑн йышши ӗҫрен тупӑш илекен организацисем пурнӑҫлама тивӗҫлӗ.

Ҫак килӗшӳ официаллӑ майпа тухнӑ хыҫҫӑн 30 кун хушшинче ӗҫпе тивӗҫтерекенсем Чӑваш Республикин ӗҫ тӑвакан влаҫӑн уполномоченнӑй органне килӗшӗве пурнӑҫлама пултарайманнине ҫырса пӗлтермен пулсан, чи пӗчӗк шайри ӗҫ укҫи калӑпӑшӗ вӗсене те пырса тивет. Ҫакӑ социаллӑ пӗлтерӗшлӗ документ шутланать. Ӗҫ параканӑн ҫавна пӑхӑнмалла, патшалӑхӑн вара бюджет йӗркеленӗ чухне тата халӑха социаллӑ пулӑшу парассинче шута илмелле.

**Л. ИВАНОВА,**
**патшалӑх тӗп налук инспекторӗ,**
**Раҫҫей Федерацийӗн патшалӑх граждан службин 3 класлӑ советникӗ.**